|—6 № Уйрăм номерĕ 25 пус. Май—ийуҥ. 1933 ç.

# КАПКАН

— Есĕ, арăм, çĕнĕ тырăран çăкăр пĕçерсе парас тетĕн еппин пайан. Епĕ килес çулхи тыр-пул тухăçлăхĕшĕн кĕрешме кайам—шăн суха туса килем. Вара хĕрлĕ хăма çине те ӳкме тивĕçлĕ пулăпăр.

Митта Петӗрӗ.

# Пашпӑртсӑр йулнӑ тӑшман

(Калав-фелйеттон).

Хурал пӳрчӗ умне пилӗк ҫын тухса тӑҫӗҫ. Вӗсенчен пӗри вӑл—хуралҫӑ Йурттай старик. Вӑл хӑй умӗнче тӑракан тӑватӑ кутамкаллӑ ҫынна мӗскӗн йеверлӗн калаҫса йулашки хут алӑ пачӗ: —Темшӗн ытла васкарӑр. Лармалччӗ-ха.. тепрер чӗлӗм туртса йамалаччӗ.

— Сӑпаҫҫипӑ, старик... Сӑпаҫҫипӑ .Чылай лартӑмӑр.

Кутамкаллӑ тӑватӑ ҫын урӑхран калаҫса тӑмарӗҫ. Пасар кассипеле тӳрех вӗсем аслӑ кӗпер йеннелле анса кайрӗҫ.

Камсемши вӗсем... мӗнле ҫынсем? Пӗлмест никам та. Тен Йурттай старик те вӗсем камне ӗретлӗн пӗлсе йулаймарӗ пулӗ. Ҫапах вӑл вӗсемпе чылай калаҫрӗ... чылай хурланулӑ ҫӗнӗ хыпарсем туйанса йулчӗ вӑл вӗсенчен. Те ҫавӑнпах та-и тен, Йурттай старик пайан тул ҫутӑлмасӑрах хурал пӳртне питӗрсе илсе, килӗнчи карчӑкӗ патне васкарӗ.

***

Кӑнтӑрла ҫитес умӗн хурал пӳрт умне Акуҫ аппа та персе ҫитрӗ:—Есир нимӗн те пӗлместӗр ха... Шӑхӑрса йулатӑр ак тӑварсӑр... ҫпичкӑсӑр.

— Мӗскӗр... мӗскер?.. тесе пырса тӑчӗҫ ун умне Уринепе Кулине инке.

— Вӑрҫӑ пуҫланат,—калаҫат Акуҫ аппа:—Йурттай карчӑкӗ йалтах каласа пачӗ. Енер каҫ хурал пӳртне тӑватӑ рабочи кӗрсе Йурттай старике пӗтӗмӗшпех ӑнлантарсе хӑварнӑ.

— Мӗнле рабоччисем?

— Мускаври самӑй пысӑк хапрӑкра ӗҫленӗ тет вӗсем. Хаљ хапрӑкие хупса лартрӗҫ, тет. Рабочисене пӗтӗмӗшпех вӑрҫа ......., тет. Вӗсем аран тарса хӑтӑлтӑмӑр тет..

— Ей-йай-йай!.. пӗтрӗ иккен ман Мирун... пӗтрӗ... ӗ-ӗ!—тесе саппун аркипе куҫне шӑлса илчӗ Кулине инке, хӑйӗн Хӗрлӗ ҫарти ывӑлӗ Мирунне аса илсе.—Пулмарӗ иккен киле таврӑнасси...

— ... Мускав ҫинче йараплансем вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ тет... Ахтапуссем те вӗҫеҫҫӗ тет.

— Ех-ай-йай!.. тет каллех Кулине.

Ӗҫлекен колхозниксем пурте макӑракан инкесем патне пырса кӗперленчӗҫ.

— Мӗскер пулнӑ... мӗн?—тет бригадир Куҫма.

— Сирӗн камсамул тӗнчине пӗтереҫҫӗ тет... Вӑрҫӑ пуҫланат. Тӑвар... краҫҫын... ҫпичкӑ... Пайан вӗсене копператтивран пӗтӗмпех илсе пӗтерчӗҫ. Ҫичӗ пӑт тӑвар илкелесе йултӑм, краҫҫынне илме ӗлкӗреймерӗм.

— Мана пӗр пӑт ҫурӑ тӑварне парӑнха еппин...

— Хаљ хама та сахал,—тет Акуҫ аппа.

Куҫма ахӑлтатса ҫиллессӗн кулса йачӗ:—Мӗн тумалла ӗнтӗ сирӗнпе?.. Мӗнле вӑрҫӑ?.. Кам-ха ун ҫинчен сире суйса панӑ?!

— Рабочисем калана... рабочисем... суйса пама урман вӗт вӗсем.

II

Колхозниксен аслӑ пуххи.

Председатӗл калаҫнине пӗтӗм колхозник ҫаварӗсене карса итлесе лараҫҫӗ.

— Йулташсем! Партипе правитӗлствӑн йыш... нӑвне иртнӗ пухурах вуласа, тӑтӑклӑн ӑнлантар... панӑччӗ сире. Колхозри хӗрарӑмсем хушшин... сехӗрленӳллӗ пӑлхану тухса кайнӑ пирки, акӑ ... йан ку ыйтупа тепӗр хут калаҫмала пулчӗ.

Мускавпа Ленинград, тата Харкӑв хулисем ... рӗн сойузӑн тӗп чӗрисем пулса тӑраҫҫӗ. Хаљ ҫ... хуласенче паспӑртизаци пырат. Паспӑрт ил... мен ҫынсем вӑл хуласенче, тата вӑл хуласен т... рашӗнче ҫӗр ҫухрӑм таран пурӑнма пултара... маҫҫӗ.

Паллах, вӑл паспӑрта пирӗн правитӗлствӑ т... лӗ сийенлӗ, йурӑхсӑр елементла ҫынсене пама... Вара ирексӗрех вӗсен ҫав хуласенчен тухса шӑва... мала пулат.

Акӑ курӑр ӗнтӗ! Йурттай старик патне кӗр... „ӑнлантарса" тухакансем рабочи йачӗпе сӗтӗре... се ҫӳрекенсем камсем пулнӑ.

Акӑ курӑр ӗнтӗ!.. Астӑватӑри? 3—4 ҫул кайал... ҫеҫ вӗсем пасарсенче лавка лартса суту туса ... речӗҫ. Сӗнтӗр йалӗнчи сутуҫӑ—Михалкка ӑрӑ... 1930-мӗш ҫултанпах вӗсем йалтан тухса кай... Мускаври пӗр савӑта кӗрсе вырнаҫнӑ пулнӑ. В... сем унта мӗнле ӗҫлесе пынисем халӗ паллӑ ма... тӗреслӳ пӗтмен-ха.

Акӑ ӗнтӗ мӗнле витӗнсе пирӗн строитӗлствӑ... кӗрсе кайма пултараҫҫӗ пирӗн тӑшмансем!.. ... ӗнтӗ мӗнле меслетсемпе пӑлхану хускатса йара... вӗсем пирӗн Йурттай йеверлӗ стариксем урлӑ!

— Вӑрҫӑ пуҫланманим апла?—тет Кулине.

— Вӑрҫӑ хаљ Совет сойузӗнче ҫуккӑ—вӑ... пур... вӑл клас вӑрҫи—клас кӗрешӗвӗ.

— Ҫичӗ пӑт тӑварна ӑҫта хуратӑн ӗнтӗ, Ак... аппа?—тесе ыйтрӗ шӑл йӗрен пӗри хыҫалтан.

Пуху кӗрлесе карӗ. Ахӑлтатаҫҫӗ. Тӑшман х... ланчӑкӗсенчен ҫиленсе тӗлӗнеҫҫӗ. Акӑ пӗр ... сухаллӑ колхозник сиксе тӑчӗ:

— Нихӑҫан та ҫав тӑшмансем „тет" сӑмахӗс... хыҫҫӑн ан кайӑр, хӗрарӑм йулташсем. Вӗсен ... мӑхӗсен хыҫҫӑн кайас вырӑнне пирӗн—вӗсен ... сӗр ӗҫӗсене шыраса тупса, чӗлхисене нихӑҫ... калаҫма пултарайми туса хума тӑрӑшас пул... Клас тӑшманӗсемпе кӗрешесси—пирӗн умри ... пысӑк задачӑ пулса тӑрат, колхозник йулташсе...

Ҫак тӑшмансен ӗҫӗсене ответлесе, вӗсемпе кӗ... шес ӗҫе татах та хайарлатса йарассине аса ил... епӗ хам йенчен ҫитес уборкӑра ударлӑ ӗҫле... чӗнетӗп, йулташсем!

— Йышӑнас!—тет Кулине инке.

— Уй ӗҫне 12 кун тӑвас вырӑнне—8 кунта ту... пӗтерме хамӑн бригадӑ йачӗпе обесаттӗлст... илетӗп, тет Куҫма.

— Тӑшмансене хамӑрӑн ударлӑхпа вӑйлӑн отп... парар! Тӗкӗнме ан пултарччӑр пире вӗсем тек!

***

Тӑшманӑн кунҫулӗ вилӗм шӑтӑкӗ патне ҫи... тӑнӑ. Йулашки вӑйне хурса вӑл пирӗнпе кӗреш... Анчах, пирӗн ӗҫ аллийӗ вӑйлӑ. Пирӗн вӑйа ним... ле хайар тӑшман та ҫӗнме пултараймӗ.

И. Нашлинке.

# Асаттен йӑлине пула

Сӗтел ҫине сарнӑ ҫивитти пек „Урпаш“ колхозӗн картишӗ тап таса выртать. Йӗри тавра ҫӑра туратлӑ йӑмрасемпе хыр ем йешӗрсе лараҫҫӗ. Сарӑ хӗвел ылттӑн шӑлӗсене йӗрсе, савӑнса кулать. Колхозниксем те хӗвел пекех савӑнса авӑн ҫапаҫҫӗ. Пӗри те ахаль тӑраканни ҫук, ӗҫре хӗреҫҫӗ.

— Канар пуль, йулташсем,—терӗ хурарах уссилӗ бригадир.

— Еппин канар кӑшт чӗлӗм туртнӑ хушӑлӑха,—килӗшрӗҫ колхозниксем.

Пӗри чӗлӗм чӗртет, тепӗри—тивретет. Ӗҫлӗ ӗнтӗ утисем те.

— Елексантӑр пичче,—терӗ сарӑрах ҫӳҫлӗ комсомолӗс,—ху колхоза ма кӗни ҫинчен каласа кӑтарт-ха?..

— А тӑхта-ха, мӗн каламали пур ун ҫинчен,—тимлесех чӗлӗмне чӗртме пуҫларӗ Елексантӑр пичче.

— Кала, кала...

— Кала...

— Еппин итлӗр,—сухалне шӑлма пуҫларӗ Елексантӑр пичче.—Вӑт ҫапла пӗр кунхине, конешнӑ, тнӗ хӗлле-ха вӑл, епӗ ҫупа улма ҫисе ларнӑ ҫӗре бригадирсем ҫитсе кӗчӗҫ—5 пӑт ыраш уламӗ,—ҫҫӗ. Патӑм конешнӑ. Пӳрте кӗрегӗп те, ҫапла тетӗп, епӗ ҫураки вӑхӑтӗнче колхоза кӗрем заготовкӑсем иртсе кайсан колхозран тухам. ӗ колхоза ан кӗр, сире тӑлӑх тесе ним налук заготовкӑ та тӳлеттермӗҫ.

— Йурӗ!—терӗ матка.

Килӗшрӗмӗр. Савӑнса пӑхрӑмӑр, конешнӑ, пӗр-рин ҫине,—куҫӗсене чарса туса кӑтартрӗ Елексантӑр пичче.

— Ха-ха, савӑнса!—ахӑрса йачӗҫ колхозниксем.

— Конешнӑ,—сухалне шӑлчӗ каллех.—Унтан колхоза кӗтӗм. Ҫураки ҫитрӗ. Ну, тетӗп, колхозран пурӗ пӗр тухатӑп, ҫӗрӗ хуралтӑр, пырӗ. Шӑйкӑ та пулать, ӑшӑх та пулать. Асӑрханӑ ҫавна бригадир Михала. Халиччен ӗҫлесе йала култаррӑн та, мана култартӑн. Мӗн ку? Намӑс мари нӑ? тет. Ну, икӗ питрен вут тӑкӑнчӗ.—К чортту тӗп—сухалас настойашчи. Вара пуҫларӑм сухапӳрне пысӑкӗш шӑйрӑк хӑвармасӑр.

— Тырӑ вырнине кала, тырӑ вырнине!—кулса Кавӑрле матки.

— Ӑна-и—ӳсӗркелет Елексантӑр пичче.—Есӗр те ӗнтӗ унта, конешнӑ. Тырӑ выратпӑр Мӑнҫуртк чортту колхоз тырри, пурпӗрех тухатӑп, теҫынсем кунне 160—200 кӗлте тӑваҫҫӗ, епӗ йе 60 тӑватӑп. Йе хӑш чух пилӗк ыратни ҫиперетӗп те, Мирун старик сысни пек месерле татӑп. Е-ей шутлатӑп ӑшӑмра,—маткапа пӗрле вырас ҫӗрте колхозӑнне выратӑпиҫ...

— Ха, ха, ха матку аса килеччӗ пуль,—ахӑраҫитлекенсем.

— Ей, ҫав калаҫатӑр,—тет Елексантӑр пичче.—тлӑн унта. Кахаланнӑшӑн хура хӑма ҫине ҫырконешнӑ, ҫитменнине сӑмсама хам кӗлеткепысӑк тунӑ. Епӗ ҫывӑрса выртатӑп, сиаш.

— Ну, тинех пит пиҫрӗ, йал кулчӗ ӗнтӗ,—тетӗп. ҫитрӗ, тырӑ валеҫеҫҫӗ. Ҫынсем 150, 200, 300 ӗҫкунӗсем, а манӑн—22. Ҫынсем пур ман пек 5 йедаклисемех маӑран икӗ хут ытла тырӑ илчӗҫ. Колхоз маррисен тыррисем сахал. Ҫынсен тырӑ пур, манӑн ҫук.

Ҫитменнине районри бригадир: ҫак Елексантӑр лодӑрӗсемпе колхоз ӑҫтан малала кайтӑр, терӗ. Тфу—тетӗп, пӗтрӗм!

Ватӑ пуҫӑмпа чут йӗрсе йараттӑм. Колхозран тухас—ҫӗр памаҫҫӗ, е-ех, тетӗп.

— Пӗтрӗнехи? Ха-ха-ха...

— Пӗтрӗм сана валь,и, маткам тетӗп, те колхозран тухас, те тухас мар. Матка чӑр пӑхрӗ куҫӑмран,—ав,—тет, хамӑр кумасем 150 пӑт тырӑ илчӗҫ. Пирӗн 50 пӑтне аран ҫывхарать...

Чӗрем лашт ҫурӑлса кайрӗ. Ну, тетӗп, кӑҫал мӑн сӑмсаллӑ мар, ҫитмӗл ҫичӗ хутлӑ куҫлӑх тӑхӑнтартсах хура хӑма ҫине ӳкереҫҫӗ ӗнтӗ тетӗп.

— Халӗ те тӑлӑх хӗрарӑмсем пек ӗҫлесе хӑшкӑлатӑп, колхозри хӗрарӑмсем кам ман пек нуша кураканни пур,—тет арӑм.

— Кӗр еппин,—тетӗп чуна хӑтарса.

Маткам та кӗчӗ.—Ну, тетӗп. Кӑҫал кахаланса пулмасть. Ӗҫлес, ҫын пекех, хамах усӑлӑ. Иртен те ир акассинче те, ҫуракинче те, бригадир кӑтартнӑ срукчен, ӗҫе йӗркелӗ тӗплӗ туса пытӑм, хӗрлӗ хӑма ҫинчен тухмарӑм. Малашне те тухассӑм ҫукха,—тет кулкаласа.

— Йе хура хӑма ҫине ленксен?—кулать Матруне.

— Е,е хура хӑма ҫине пӗлтӗрхи Елексантӑр Тимофейч ӳктӗр, кӑҫалхине шалиш. Е-ех, ҫупкӑпа та ҫӳҫрен илӗттӗм кӑҫалхи пек пулсан хама хам,—турткаласа тапкаланма пуҫларӗ Елексантӑр пичче,—ак, ҫапла, ак ҫапла...

— Ха-ха-ха-ха вӑт ҫаплах-и?..

— Ну, кулса мар, пайан пӗтерес ку ӗҫе,—тӑчӗ унтан Елексантӑр пичче. Пурте ун хыҫҫӑн тӑрса утрӗҫ.

— Чӑнах пӗлтӗр пит те кахалчӗ,—терӗ Иван матки.

— Ак кӑҫал саҫҫемех расна ҫын, пур ӗҫре те вӑл хастар, пӗлтӗр сыснала выртҫа ҫӳреччӗ.

— Пӗлтӗр асатте йӑлине пула,—терӗ те Елексантӑр пичче ӗҫе тытӑнчӗ.

---

## Вӗренӳ ҫулӗ ҫитсен

(Хӑшпӗр шкулсене „хисеплесе“).

Учитӗл хӗпӗртет.
Ҫитейнӗ ҫӗнӗ ҫул.
Кӗнекесем килнӗ
Кашни валь,и, урра!
Хут-кӑрандаш та пур,
Тетрать те темӗн чул,
Вӑл клас ҫине
Савса пӑхса тӑрать:
—Халь петӗмӗр...
Начарччӗ ӗлӗкрех...
. . . . . . . . . . .
Ну, шел—
Ку пулиӑ нӗтӗмпех вӗт
Тӑлӗкре.

Ив. Ник-в.

**Иван-Мучи.**

# Çăвар хуçин çийĕс килнĕ

Хĕвел ăшшине тӳсейменнипе вата йăмра мăшлатса çеç ларать кил карти варринче. Йăмри айĕнче вĕлтĕрен, ерĕмути, хупах шăтса ларнă çĕр çинче, çирĕм тăвата çулхи хусах выртать çăварне карса. Ĕççĕр аптăранă шăнисем хусахăн тути хĕрринче çӳреççĕ-çӳреççĕ те: кунта уборнăй пулĕ-ха тесе билет илмесĕрех çăварне кĕрсе кайаççĕ.

Çăвар хуçи шăнасем мăшкăланине сисеймест мĕн. Вĕсемпе аппаланма унăн пĕр самантлăха та вăхăт пулман, мĕншĕн тесен вăл вăхăтра унăн... хырăмне питех те пысăк шухăшсем кĕрсе выртнă пулнă.

* * *

Çынна курсан:

— Кил-ха мана вырмашкăн!—тесе пуçне тайса йăлăнса йулакан ыраш уйне чăнкăр-чăнкăр çурласем утса пырса çавăрса илеççĕ тăвата йенчен. Хĕвел çутинче хурçисем çиçĕм пек выљаса тăраççĕ.

Кампала кам ăмăртассине палăртса тухнă хыççăн, пин çурла ытла колхозăн уй пек сарлака та вăрăм анине вырма тытăнса карĕç. Кăчăртатнă сасă пĕтĕм сывлăша хупласа тăчĕ. Етемсĕр мĕнсĕр выраççĕ вĕт çурласем! Тĕлĕнмелеçке!

— Васкăр, васкăр, Раманăн хырăм выçнă,—теççĕ малтарахра пыракан çурласем кайрарахрисене васкатса.

Вырса тăкнă ырашран кĕлтесем уйăрăлса çыхăнса пыраççĕ. Кĕлтесем, тĕмсем пулма, утса кайаççĕ. Тĕмре темиçе самант хушши ларсассăн ана тăрăх сиккипе чупса пырса çĕмел пулса купаланаççĕ.

— Мĕн çĕмеле купаланса аппаланмала! Айтăр урапа çине купаланса йĕтем çине кайăпăр. Раманăн хырăм выçнă вĕт!—тенĕ сасăсем илтĕнчĕç кĕлтесем хушшинчен.

— Ăçта урапи?

Урапи шăлтăртатса лашасăр-мĕнсĕрех кусса пырса ларчĕ кĕлтесем патне. Лаши те çавăнтах чупса пырса, туртасем хушшине кĕрсе тăрса, ихохо! кĕçенсе йачĕ.

Йĕнерчĕкĕ те çавăнтах пулнă. Йалт! сикрĕ вăл лашин çурăмĕ çине. Хырăмайлăхне унтах тăракан хăмăчĕ хăйĕн клешшисемпе тытса çыхса йачĕ.

Унтан ĕçчен хăмăт лаша умне пырса тăрса унăн кусĕнчен çутă тӳмисемпе пăхса:

— Пăр майна!—терĕ хыттăн.

Лаша итлерĕ. Хăмăт лаша майне хăй ăшне кĕртсе йачĕ те, пăйавĕсемпе выљатса илчĕ. Хăвăртрах кӳлсе пĕтерме хушрĕ вăл çапла тунипе.

Икĕ кĕлте пычĕç те, лашана пĕр начасра кӳлсе лартрĕç. Çапла, кĕлтесем хăйсемех кӳлчĕç.

Халĕ ĕнтĕ тийесси çеç йулчĕ. Çавна сиссе, йă
ра айĕнче выртакан Раман, çăварне тата вăйл
рах сарса йарать.

Урапа çине кĕлтесем сиксе хăпарса йĕркел
купаланаççĕ. Урапе пĕчĕк пӳрт пысăкĕш пул
тулчĕ. Пуслăхĕ йалт! сиксе хăпарса выртрĕ кĕ
тесене урлă.

Пуслăхăн вĕренне мĕнле туртса çыхĕç-ха ĕн
кусем?

Çак шухăш пуçне кĕрсе кайнипе, вĕрен, хăмă
пек, салхулăн хумханса илчĕ.

Рамана чĕнес çыхмашкăн, вăл ĕнтĕ час киле
мĕ. Çийĕнчен тата унăн хырăмĕ выçă. Выçă х
рăмлă етеме ĕçлеттерсе вăйне пĕтерме шел.

Инçетрех мар, çул хĕрринче мăн чул вырт
никама усă кӳмесĕр. Çав чул, кусен хуйхине и
се хăйĕн кĕлеткине йăвăррăн çавăра-çавăра ку



тарса пырать хайхисем тăнă çĕре. Сике-сикех у
тăнса пуслăха хытарса та парать вăл.

— Ну, вĕçтер хăвăртрах! Раманăн хырăм вы
нă,—терĕ чул лашана васкатса.

Лаши ахаљљийех пулман, çил çунатлийех пу
нă. Пĕр самантрах турттарса çитерчĕ кĕлте ур
пине Раманăн йĕтемĕ çине.

— Тпру!—терĕ унта çитсен хăйне хăй.

Йĕтемне, кĕлте урапи пыраччен, кĕреçесем х
семех касса йакатса, шăпăрсем тытса шăлса
тел пек тап таса ним çӳп-çапсăр туса йанă. Кĕ
тесем урапа çинчен анса, шуç пек йăлкăшак



нтем çине сарăнчĕç. Çапуççисем никам тытмасă-рах сывлăшра выҫҫанса кĕлте сарăмне пуçĕнчен танклаттарма тытăнчĕç (молотилкăсемпе аппалан-ма йуратман пирĕн Раман).

Кĕреçи сăвăрат, тасатат.

Михĕсем пырса тулчĕç. Çăварĕсене усрĕç те тĕштыр тултарса хăйсемех, патаксенчен тунă урисемпе утса, армана карĕç.

Арманĕ тырăран çăнăх туса пачĕ. Пит вĕтĕ авăртрĕ,—хăпартлу тумашкăн аван пулмала вăл çăнăхпа.

Раманăн уçса хунă çăварĕнчен сĕлехисем йухма тытăнаççĕ.

...Çăнăхпа тулнă михĕсем Раман кĕлетне кĕрсе

ыхăнчĕç. Пĕр михĕ тӳрех пӳртре ларакан кăвас чĕрес ăшне ӳпĕнчĕ. Çатма аври, çăлтан шыв кӳрсе килсе хатĕрлесе хунă пулнă унччен, вĕсем килеччен.

Çăнăх кăвас чĕрес ăшĕнче выҫҫаса çăрăнчĕ. Унтан чусти йӳççе хăпарса пăш-пăш! тума пуçларĕ.

Вут пуленккисем утса кĕрсе пĕр кăмака тулчĕç. Пĕр пуленкине мăн çĕçĕ тытрĕ те, хăйăсем чĕлсе илчĕ унтан. Шăрпăк курапки хăй ăшĕнчен шăрпăкне кăл арса çутса йачĕ. Çунакан хăйăсем кăмакана кĕрсе кайса вутта тивертрĕç те, кăмаки шарлатарсах çунма пуçларĕ.

Кăмака çуннă вăхăтра чусти хăйех кăвас чĕресĕнчен тухса, кункăра çинче темиçе хут йытă пек йăваланса çăвăрăнкаларĕ те, чустаран çăкăр кĕлеткисем пулса тăчĕç.

Инçех йулмарĕ ĕнтĕ Раманăн çиесси.

Унанă çăкăрсем çăкăр кĕреçи çине утланса ларса кăмакана вĕлт! çеç кĕрсе выртаççĕ.

Кăмакан вĭушкисем халтăрт! туса хупăнаççĕ.

Раман çăварĕнчен йухакан сĕлехесем татах çăраланаççĕ,—инçех йулмарĕ ĕнтĕ пиçесси те. Чăнахах та, пĕр виç-тăват минутранах пĕр çăкри кăмака питлĕхне уçса:

— Ой, пиççе ывăнтăм! Пит шăрăх кăмакара!—тесе кăмака анине тухса ларчĕ.

Ун хыççăн ытти çăкрисем те: епĕр те пиçрĕмĕр, тесе тухса карĕç. Пичĕсем хĕрелнĕ хăйсен.

— Аçта çĕçĕ? Касас пулат мана. Раманăн хырăм выçнă,—терĕ малтан тухнă çăкри пӳртри йапаласене.

Çĕççи унтах пулнă. Çăкăра касрĕ те вăл, сывăхра ларакан пукан çине пăрахса йачĕ. Пуканĕ, тăвата урипе утса, пăсланса выртакан çăкăр чĕлĕсене йăмра айĕнче выртакан Раман патне илсе пырса, тӳрех унăн çăварĕ тĕлне ӳпĕнтерчĕ.

— Хырăм выçрĕ пуҫ сан, Раман! Çи-ха çĕнĕ тырăран тунă ăшă çăкăра, терĕ аран тухакан сассипе.

Раман ланк! хыпрĕ. Тутлă сĕлехисене пухса чăмлама тытăнчĕ. Тфу! Мĕнле çăкăр ку? Йĕклентерет.

Курак мекĕрленсе хăйĕн вараланчăкне пăрахса йанă пулнă Раманăн уçă çăварĕ тĕлне.

— Тфу!

Раманăн çĕнĕ тырри çавă пулнă. Ара нимĕн те тумали çук ĕнтĕ,—хĕлĕпе çу каçипе колхозра вăл 5 ĕçкунĕ çеç тунă та, тем çисе пурăнас, тет ĕнтĕ. Колхоз тырри хăйех пуçтаранса кĕрсе çăкăр пулассă шанса выртнă та вăл...

Йумахăм пĕтрĕ, кахалсем пĕтмен-ха. Вĕсемпе кĕрешетпĕр малала та.

# Кахал йурри

Йатăм ман
Ăраман,
Еп çынтан хăраман.
Йуратмасп
Еп ĕçе,
Ну сатто
Хыт ĕçеп,
Ес манран
Ан хăра,
Пурăнап
Ыйхăра!
Карчăк
Чорт вĕт хуса
Кӳртрĕ çав
колхоза,
Пурăнап
Хама май,
Çывăрап
Пит нумай!
Епĕ хам
Ăраман!
Çакнашкал
Еçсем ман.
Ех, ĕç!
Есĕ—хĕç;
Ман умран
К чорту вĕç.
Тыр вырмасп—
Хăратат,
Пилĕк вĕт
Ыратат.
Кил-кил!
Михаил,
Ман çине
Пăхса ил.
Ах, сăра—
Тăварла,
Еп—куран
Мухмăрла!
Çитрĕ çав
Араштав,
Çимели
Ман ăçта?
Кăравул!
Мĕн курас?
Пурнăç ман
Пит начар,
Хырăмра—
Чарр-чарр-чарр!
Лотăр теççĕ
Мана,
Пулат кам
Самана!
Чăнах-шим
Еп кахал?
Ма кулат
Манран йал?
Ман айра
Кăмака,
Чăн калап
Сăмаха!
Пӳртĕм ман
Ав çĕрет,
Кăмаки
Пĕçерет.
Ей, йулташ—
Пыршăсем,
Лăпланăр
Шуйтансем!
Çăкăр çук
Ай-ай-ай!

**Марк Аттай.**

Çергей Малавин.

# Çунатлă шофёр

Иванов шофёр хăйне шанса панă машин çине ларсанах урса кайнине нумайĕшĕ куркаланă, курнă çеç мар, çамкине хунар та кăларкаланă.

Çапла пĕр çынăн Канаша каймала пулнă. Урамра тăракан пĕр машин патне пыраť.

— Ăçта кайаť ку машин?—ыйтаť вăл ăшăпа тарланă шофёртан.

— Канаша.

— Манăн та Канаша çитмеле пайан, вырăн пулаť-и?

— Укçа тӳле, илсе кайатăп.

— Пошалстă, ме,—тăсаť пулаť пăссажир 20 тенкĕ укçа,—пожалăстă. Укçасăр мар, конешнă. А, билет?

— Билетне кайран парăп,—çаннипе сăмсине сăтăраť „ырă шофёр“,—Канаша çитерехпе,—тет вăл укçине чиксе.

Пăсажир ун çине тĕлĕнсе пăхса илет те, чăмаданĕсене грузовик çине хума пуçлаť.

— Билечĕ мĕнĕ çăва патне, мана çитнĕ пултăр вăхăта, укçа тӳленĕ. Ну кайрăмăри?

— Манăн тата лартмалисем пур-ха, ăçта есĕ питĕ васкатăн? - чакараť ăна шофёр.

Лартас пеккисене лартса пĕтерсен, пирĕн „ырă шофёр“ машинăна „во веç дух“ йараť, шинасем тивнĕ çĕре тивеççĕ, тивмен çĕре тивмеççĕ. Куçа уçса хупнă çĕре Шупашкартан тухса вĕçет машин.

— Вăт çуллахи çилçуна ăçта!—чĕтрекен сассипе хăраман пек пулса калаť пĕр килне таврăнакан студент, кӳршине майран ыталаса. Ыталамасан сирпĕнсе йуласран хăраť. Тепĕр пăсажир кӳршин калифинчен çавăрса тытнă.

— Калифене çуран, чорт!—ун аллине хăрах „пушă“ аллипе вĕçересшĕн калифе тăхăннă çын. Тепĕр аллипе вăл хăй умĕнче чĕркуççи çинче ларса пыракан колхозникĕн хăрăм пек хура, шĕвĕр сухалне çавăрса тытнă.

— Сухала çăлса кăларан, есремет,—кăшкăраť вăл хулăм, хайар сасăпа, хăрах „пушă“ аллипе сухалне тытнăран вĕçерес тесе, тепĕр аллипе вăл хăй те ун умĕнче, вĕçес тесе тăракан халат пек саркаланнă мăнтăр майран. Атăл пек сарлака йупкинчен тытнă. Майра вăл ӳксен те çĕре ӳкес мар, мĕнле те пулсан аранчă çӳлеле вĕçсе йулас тесе, конешнă, хĕвелпе пиçнĕ пăхăр тĕслĕ хулăм аллисене çӳлеле тăратнă.

— Йупкăна çуран вăт, махамет, уккайаннăй,—çапма пуçларĕ вăл сылтăм аллине.—Йар, кĕпене, йар лайăхлăхпа!

Автомобил вĕçет, хыçра тусан тусаť, хирĕçле çил сăмса шăтăкĕнчен кĕрсе хăлхаран шăхăрса тухаť.

— Охе-хо-хо-хо-о-о!—кăшнĕраť машин. Çаттăр çаттăр, çаттăр, çаттар терлĕ тĕле, урăписене
мĕрсе, канавсем урлă, автомобилтен кайа мар в
тереççĕ хирĕç пулнă лавсем.

— Тпру-тпру-у-у у! тенĕ сана,—тилхепине йăва
кайса туртаť сухалĕ тĕслĕ хăмăр картус тăхă
çын.—Тпру!

Каккуй унта „тпру“, лашин урисем кинори п
выљаççĕ, тăваттă мар, вунтăватă ура курăнаť с
ри хăпнă „урхамахăн“.

Охо-хо-хо-о-о!—тепĕрре çухăрса йараť грузов

Машин сикет, машин лăкаť, такана çинче к
чӳхенĕ пек чӳхет телейсĕр пăссажирсене. Х
мĕскер-ха „телейсĕр“ унта, итлĕр малала, ырма
пулсан.

Ман „пускил“ ăшпа аптăранă, вăл хăрах алл
вăрăм сăмсалă кепкине тытнă, тепĕринпе ăшне
валаť.

— Халђ çеç апат çисе тухнăччĕ, ох, пĕтерет к
ахлатаť вăл. кепкине айне хурса.—Çĕрпӳне
тейес çук, темĕн. Шаккăрха шофёра, йерипен
рех кайтăр!—пĕтĕм вăйĕпе кăшкăрса йачĕ вăл.
сассине çил çав çекундрах аллă-утмăл чалăша
се кайрĕ.

Шăрăхпа аптăранă, темле курак пек çăва
карнă мăнтăр майра тем каласшăн пулчĕ, ту
сиккелентерчĕ çеç, çав вăхăтра машин трук чар
нипе, хура сухал майрана çурăмĕнчен качака т
пек тăрăслаттарчĕ, майра тăратнă хулăм алл
хăмăр сухала ĕнсерен „çаклатса“ йачĕ, (ăнсăрт
конешнă, йури мар ĕнтĕ), хăмăр сухал сарл
çамкипе автомобил кузăвне кайса шанлаттарчĕ
çамкине хыпаласа пăхрĕ, кузăвĕ çемçе мар п
мала—çамки пĕр тĕлтен кăвакарнă.

— Абашш-ш!—сывласа йачĕç пăссажирсем.

Шофёр пирĕн тимĕр шапа пек, кабинăран п
не кăтартрĕ те, тусан тулнă куçне сăтăркаласа ç
сасси пачĕ. Пăссажирсем пурте тĕлĕннĕ, ăн
кайнă, ним чĕнме хăраççĕ. Кабинкăра хӳр
шуйттан ларса пыраť пуљ тесе шутланă вĕсен
хăшĕ-пĕрисем, пуç çаврăнса ăвтан кайманнис

— Анакан çук и?—илтĕнчĕ сасă.

„Халђ çеç апат çисе тухнă“ текен хура су
анма тесе хăрах урине çĕреле йанăччĕ çеç, ав
мобил тăрлатса хускатса кайрĕ, ой ты, боже м
Абаш çурчĕсем вĕлт те вĕлт çеç иртсе йула
минут хушшинче йалĕ те куçран çухалчĕ.

Калас пулаť, машин çинче икĕ ачалă арăм л
са пынă, пăссажирсем хăйсен чуне хĕрхенсе,
сене астуман та. Тепĕр тĕрлĕ оркестр, ачасем
реççĕ.

— Ан хăвала вăл тери, чорт, ачасене хăра
чирлетме пултаратăн.

Илтмест шофёр, хăвалаť „во веçу“. Машин вĕ

машин лăкать, çил кышлать, тусан тусать, ача йĕрет, мăнтăр майра турра кĕлтăвать.

— Ей, мĕн хăтланатăн есĕ?—тĕлĕннипе кăшкăрса ыйтать унтан студент, хăй машин кузăвне аллине ыталанă, урине багажсемпе хĕстернĕ.—Мĕн пулнă сана?

— Çул çинче вилес мар тетĕп, ывлăм!

— Епĕ санăн ывлу пулма пултараймастăп, тĕттĕм карчăка анне теме пултараймаст... Каласа пĕтереймерĕ, машин сасартăк чăрăннипе вăл чĕлхине çыртнă.

— Çĕрпӳ! Чылайĕшĕ анса тарчĕç, кузăв çумĕнче нимăр сухал вырткать.

— Ей мĕн пулнă сана! Тăр!

Старик тăчĕ те унтала кунтала пăхкалать.

— Чĕриха епĕ?

— Чĕрĕ.

— Чĕпĕт-ха мана.

— Вăхăт çук, „тула" каймала,—тет хура сухал. Анса вĕçтерет вăл та.

Мăнтăр майра виç тăват хут лачлаттарса сурчĕ те, вăрăм йупкине шăналăк пек вĕçтеркелесе утрĕ йăшаланса килнеле.

Çĕрпӳ. Шăрăх. Тусан. Сивĕ квас ĕçес килет. Пĕри шофер патне пычĕ.

— Нумай тăратпăр-и?

— Çур сехет,—терĕ вăл пĕр пăралукала сулланса.

— Миçе сехет килтĕмĕр?

— Сехе-ет терĕ, 38 минут, вăт мĕнчул килнĕ.

Хăшĕсем квас шырама кайрĕç, хăшĕсем апат çиме, хĕрарăмсем канашлаççĕ.

— Кайар-ши, кайар мар-ши малала, çитерейес çук ку Канаша.

— Билет илнĕ, йепле тăрса йулас тетĕн çынсемпе, пĕтсен те пĕтетпĕр, кайас. Аçта, шурлăха кайса çухалчĕ шофĕр? Е? Ăçта вăл вĕçкĕн?

Кĕтеççĕ, çук шофĕр. 43 минут иртсен, шофĕр... йăкаланса çитрĕ машин патне. Шупашкартан пĕр амăшне хăй кабинкине лартса пынăччĕ. Çĕрпӳре та икĕ амăшĕ тупăннă. Ăна виçĕ амăшă çуратнă пулсан, çавăнпа вăл нимĕнрен те, никамран та хăрамаст.

Машин патнĕ çынсем пухăннă, шофĕр вĕсен çине сӳнме пуçланă куçĕсемпе пăхса илчĕ те, регĕнт пек аллине сулчĕ.

— Ларăр пурте, камăн Канаша каймала, илсе кайап пурне те, епĕ вĕт, никамран та хăрамастăп,—терĕ вăл вĕсене.—Момент çитеретĕп.

Ларчĕç, конешнă, пурте хăпарса, укçине илнĕ, билет пани курăнмарĕ.

— Пĕрре, иккĕ, виççĕ... вунна, çирĕм, çирĕм виççĕ. Çирĕм виçĕ çын. Ларма çук, ура çинче тăрса пырсан, спаççибă кала. Нормă—15—16 çын пулмала.

Ачасем макăраççĕ, вĕсене хĕссе хунă. Пĕр мужике тепри, хăй ларасшăн уринчен туртса антарчĕ.

— Ан кунтан, мана ларма çук! Тавлашу-харкашу, темĕн те пур

— Машина çĕмĕрен вĕт, идиот! Ма ун чул çын лартрăн?—ыйтать пĕри шофĕртан.

— Санăн ĕç çук, епĕ хам ответ парап (виç йаташлă сăмах). Ларсан лар, атту тăратса хăваратăп.

Ну, хускалса кайрĕ машин, батюшки мои, çил, тăвăл, çиçĕм. Пĕри Çĕрпӳрен тухичченех кабинкă çине шаккама пуçларĕ.

— Чар, машинăна, ачасене таптаса вĕлеретĕн! Чар, чорт!—икĕ аллипе шаккать кабинкăна.

Анса шофĕра йатлас тесе пычĕ ун патнеле, шофĕр кăшкăрса пăрахрĕ те, „тустарчĕ тусана". Пăссажирĕн йапалисем автомобил çинче кайрĕç, ку аллипе тăскаласа йулчĕ. Вăл шофĕрпа тавлашнă вăхăтра пĕр хĕрарăм икĕ çамрăк ачипе анса йулнă.

-- Ну, мĕн тăватпăр ĕнтĕ?

— Тепĕр машина кĕтмеле пулать.

— Çĕнĕрен билетсем илмеле пулать пулĕ?

— Темĕн тумала? Аптăрарăм, нимĕн тума та пĕлместĕп...

Пирĕн повĕç нумайа тăсăлчĕ. Кĕскерех каласа пĕтерес, штолĕ.

Каç пуличчен Шупашкара калла çавăрнап тесе мухтанакан ӳсĕр, вĕçкĕн, чарусăр шофĕр тепĕр кун касчен Чурачăкра ларнă. Ытти машинсем унтала та иртсе кайаççĕ, кунтала та, а Иванов йĕс çамкине сăтăрса, пĕр сутка ытла ларнă Чурачăкра.

— Епĕ машин чăтать пулĕ тесе шутларăм,—мухмăрлă куçĕсене хупкалать вăл,—çук чăтаймарĕ, халер, ванчĕ.

Унăн мухмăрлă пуçĕ ыратать, ваннă машин, вăл ухмах пирки тарăхса ларать, пăссажирсен укçисем йĕреççĕ, патшалăх ĕнси чăтма çук ыратать. Çурăлнă камĕрă шофĕрăн киревсĕр, сута ленкмеле „ĕçĕшĕн", вăтанса ларать. Пĕр шофĕр Иванов çеç никамран та вăтанмасть, никамран та хăрамасть.

Пĕр пăссажир хăйĕн багажне халĕ те илеймен-ха, те çухатнă, те сутса ĕçсе йанă шофĕр Иванов.

Вăт çаплала ĕçсем пулчĕç иртнĕ кунсенче. Ун пек „йапаласем" час-часах пулкалать тени илтĕнкелет.

---

# Йăвана

Йăван унта, Йăван кунта...
Пав Йăванах таçта та.

Хăш-хăш çĕрте районра,
Калсенче те çав йурра:
Çĕрлĕ пуху ларура,
Лăпăнаççĕ пĕр çынна.

Профсойусăн пуххинче:
—Сойуз ĕçне шут тума
Парас пулать Йăвана...

—Коопераци суйлавра,
Мĕнле çынна тупмала?
—Хушас пулать Йăвана.
--МОПР ĕçĕ пит начар,
Ăçтан тупас пĕр хастар?

—Ара, пирĕн Йăванах...
Суйлас пулать Йăванах.
—Начаркасра йалсовет
Ытла шутсăр хӳрере,
Чарса пырать пур ĕçе.

Кама йарас йусама?
—Ма йарас мар Йăвана.
Хăш-хăш çĕрте çак йумах
Пулать пуль çав вырăнтах.

Астăвăр-ха, йулташсем,
Сирĕн мĕнле ĕç йĕрсем?
Пур çĕрте те ĕç тума
Хушмастăри Йăвана?

**Кăтра Павăл.**

**Митта Петĕрĕ.**

# Кирĕксем

## I.

Шетник Махали çинчен хаљ йалйышсем хутранситрен çеç аса илсе калаçкалаççĕ. Мĕншĕн тесен, хаљ Михала хăй те, хăйĕнчен тĕвĕленсе пулнă ачипăчисем те йалта çук. А, арăмĕ... Унăн санă арăмĕ виçĕмçулах Йавăшри кĕрӳшĕсен ĕçки-çикипе „ыр курса" тавăраннă чух хуплă çуна çинче ĕнерлесе пынă çĕртрех сыв ăшĕ пĕлĕт çинелле кăвакарчăн пулмасăр х вĕçсе тухса кайнă. Вилнĕ вăл. Вара ăна пытарнă. Апла тăк хаљ вăл та йалта çуккă, значăт.

Михалана йал сыннисем (тĕрĕсрех каласан: колхоз çыннисем) унăн ĕлĕкхи „ырă" кăмăлне аса илсе, пурлăхне (кунта ĕнтĕ 120 пуç вĕлле, тата ултă çунатлă çил арманĕ те кĕрет). Пурне те шута илсе, вăл пурлăхăн тупăшĕ 4 батрака çӳçпуç шураличен ĕçлеттерсе пураннинчен килнине те чăн татăклăн хисепе илсе, Михалана хисеплĕн кăна раскулачăт туса çемйипех йалтан хăваласа кăларса йараççĕ. Ун чухне вăл йал тĕрлĕ тĕслĕ сăмахсем кунчаларĕ:

— Çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлерĕ те... ĕçле-ĕçле пурлăх пухрĕ те . Халĕ хăваласа кăларса йачĕçĕ иккен,—терĕç кулаксем.

— Çынсем чунне-мĕнне пĕлмесĕр йун ĕçсе кӳпченĕ ерешмене хамăр хушăра усрама пултараймастпăр, сăмах татăклă,—терĕç чухăнсем.

— Çург кирлĕ ĕнтĕ. Колхозăн ĕмĕчĕ... Ав Михала çуртне те колхозăн кĕнчелерĕ туса хунă.

— Тепĕр пулĕмне йаçлĕ тăвасшăн тет-ха тата...

— Çитет ĕнтĕ... Ыр курчĕ.

— Тĕрĕс.

Çавăн пек Михала асăннă хыççăн умлă-хыçлă йĕркешерĕн тухи-туха ӳкнĕ Пасал йалĕнчи пурăвакансенĕн сăвăрĕнчен сăмахсем.

Унтанпа ĕнтĕ чылай кун çулсем иртрĕçĕ. Йал йачĕ улшăннăçемĕн ула ăнса колхоз йачĕпе витĕнсе пырат.

— 54% колхозра,—тет райанхи Пасал сасси.— Çитес çулчен 80%-та çитетпĕрех.

## II.

— Епĕ кунта килни иккĕмĕш уйăх çине кайрĕ пулин те, манăн ĕçри улшăнусем çителĕклĕнĕх куранаймаççĕ,— есе хăйне хăй йăвăррăн шухăша кайса ларнă пĕр ирхине Миронăв й-ш:—Мĕнма капла?.. Мĕншĕн таврари йалсем патшалăха тырă парас ĕçĕн планне пĕтемĕшпех тултарнă пулсан, пирĕн Йавăш йалĕн 60% çеç тăрат. Йал пуçлăхĕ Суманăв та шанчăклă етем... Вăтă партийцă. 4 мĕш çул пуçлăх пулса ĕçлет. Анчах темĕскер, иртнĕ каçхи пленумра мана ун кăмăлĕ таçтала пăрăн а кĕрсе кайнă пек туйăнса кайрĕ-ха...

...Ну, и райком. Райкомрисем каллех мана ĕнтĕ ку прорывшăн пите хĕретеççĕ,—терĕ те, Миронăв й-ш йалсовет кăнчелерне кайас шутпа картусне илсе тăхăнса йачĕ.

— Сана паккет.. терĕ алăкран кĕрсе тăнă пушталйун сасси.

— Паккет? Йурат... йурат.

„Йавăшри парти йачейкин çекретарне—Миронăв й-ша" тесе çырса хунă паккечĕ çине.

— Райкомра... Прорывшăн ĕнтĕ... çавăншăн. Паккета çурса салатрĕ.

„Йавăш йалĕнче çуралса ӳснĕскер. Парти член йачĕ Кадкин Иван. Совпартшкулра вĕренсе тух Халĕ Хеншикри ШКМ-ра обшчествовед пулса в рентет... Çав çыннăн тĕп килĕнчи пурнăçне к тартса, тата хăй çинчен характеристикă çыр ыранах райкома нарăчнайпа йар.

Райком çекретарĕ (алă пуснă)".

— Да... Мĕн тăвасшăн-ши вара унпа. Тасату е тĕ... Чисткă. Тасатăвăн кирĕкĕ пулљ-ха ку ет Пĕлместĕп. Суйланăв пĕлсессĕн çеç.

## III.

...Чăнах, хăш йалсемчĕ ха вăл çын... Кадки Кадкин... Кад... Çук. Ун пек йатлă çын çук пир йалта... Ивансем чылай вĕсем те... Ну... Кад çук,—тет Суйланăв Миронăв й-ш тĕпчечĕ хыççă

— Ку йал мар апла... Апла пулсан, çапла çыр йарăпăр.

— Мĕнма кирлĕ вара вăл çын пире?

— Сана еп, Суйланăв й-ш, вăтă партийцă, ш чăклă етем тесе калатăп: райкомран ăна ыйтаç

— Райкомран... Кадкин Ивана... Чисктă... Па билет... Миронăв й-ш. Сана та епĕ шанса калат Анчах... Кадкин...

Суйланăвпа Кадкин камне вăл йал пайан т татăклăн пĕлсе татăклăн хак пачĕ.

Кадкин (Шетник) Йванĕ Йавăш йалĕнче ма Пасал йалĕнче çуралса ӳснĕ, Шетник Михал вăталăх ывăлĕ вăл. Суйланăв—Михалан кĕрӳ Иванăн йыснăшĕ. Иван, йыснăшĕ туса панă ĕн терӳпе „батрак" пулса Совпартшкулран вĕре тухнă. Парти ĕретне кĕрсе кайнă. Хаљ вăл х çуралса ӳснĕ районра мар, йут районра витĕ ĕçлет. Анчах тĕплĕнех витĕнсе ĕлкĕреймен п кĕнчĕк ăнсăртран усăлса кайса, Кадкин—„бат кăн" ӳпки-пĕверне йал халăхĕ çаплипех ку илнĕ.

Обшчествовед. Чухăн, колхозник ачисене хăв са, „хăйматлăхсен" ачисене КÇШ не кĕме мĕ меслетсемпе Кадкин тăрăшса пыни çинчен ку чылайах чарăнса тăмапăр. Ун пек ĕçсем унăн хал мар. Сахалах мар выгăвăрсем туйăннă райкомран ун пек ĕçсемшĕн.

Обшчествовед... Йалхуçалăхĕ хушшинче те тивлă çын пулмалласке-ха. Йалсоветне пулă пымала. Кадкин „пулăшат".

Пĕр самокритикăна йуратакан чухăна колх ран кăларса пăрахаççĕ. Раскулачăт тăваççĕ. Ĕн Ĕни те унăн раскулачăт тăвăнат.

— Давай сутас. Торги тăвас,—тет Кадкин. Х тă хак. 30 тенке хакланат ĕне.

— Хам илетĕп, ман укçа пур,—тет Кадкин.

Ĕнене илет. Мĕскĕн ĕне, хуçийĕн ачи-пăчийĕс типĕтсе хăварса, Кадкинăн Йавăшри йыснăшĕ Суйманăв патне куçат.

— Ĕнентерӳшĕн... Пичетлишĕн. Тăваншăн...

— Йурат. Манса каймашăн тав тăвас...

IV.

— Да... Ĕçлеççĕ.

— Тĕлĕнтереççĕ—калаçать ĕçхалăх.

— Нимĕн тĕлĕнмели те çук, тет йал активĕ:— Клас тăшманĕ пĕтмен. Тăшман тĕпĕ-йĕрипех пĕтменни—вĕсемпе кĕрешес ĕçе татах та, татах çивĕчлетсе йамаллине пĕлтерет. Тăшманпа кĕрешме хăрушă та, меслетлĕ. Пуринчен ытла партбилетпа пĕркеннĕ тăшмансемпе кĕрешме хĕнтерех.

„Районри халăх сучĕ сире айăплисен шучĕпе хăйин уçă ларуне килме чĕнет. Килмесен мĕн пулассии тепĕр йенче" тесе çырнă повескăна илсен, Кадкинпа Суйланăв пĕр-пĕрин куçĕнчен чылайчен илĕнтермии кăвакарса кайса пăхса тăчĕç.

# Тасатĕç

Манăн герой çирĕп большевиксемпе пĕрле чаплă та йăвăр çул тăрăх тĕрлĕрен тумхахсене çĕмĕрсе-çĕмĕрсе утайман. Тумхахсене таптаса çĕмĕрме тăрсан унăн ачаш урисем—апап, айай!—тесе йăнăшма вĕренсе кайнă. Çитменнине вăйĕ те, мĕскĕнскерĕн, пĕр миликрама йахăн çеç туртнă. А куçĕ тата. Куçĕ траххомлă пулмасан та витĕрех курман. Ну простă, пĕрене—улăм пĕрчи пек, хапрăк-савăтсем—çпичкă коропки пек çеç курăннă. Çавăнпа та вăл хăй те сисмен, сылтăм йенелле пăрăнса кайнă.

Вăл çапла майпа тĕп çулйĕртен аташса кайса йаланах утнă. Утсан-утсан, пĕр пўрте кĕрсе тăнă. Акă вăл кулак хырăмĕ пек аслă пўлĕмре.

Мăн сĕтел. Сĕтел тавра чухăнсен йунне ĕçме йуратакан хайартан та хайар тискер кайăксем. Пурте у-у-у тесе шăлĕсене шаккаççĕ. Трофимăв йатлăскер пуринчен те тискерĕн курăнать.

— А, килах, килах, йулташ, Петров! Вĕт есĕ Вутланти „Радио" колхозĕн секретарĕ. Правлени членĕ. Комунис... Пирĕнпе килĕштерекен чĕрчунсене килĕштеретпĕр епĕр,—кăмака çăварĕсем пек карăла-карăла илчĕç çăварĕсем Петрова курсан.

Тепĕр минутран Петров сăпка çинче йарăннă пек йарăннă. Ăна:

— Урра... Урра!..—тесе хисеплесе çăмхана вылятнă пек сывлăшра сиктернĕ.

Нумай та тăман сĕтел çине литрсем шăта-шăталарнă. Пурте сĕтел хушшине чăмаç.

— Меха, Петров, пушат,—тет, Трофимăвĕ ерех тыттарса,—кун пеккине райра та ĕçеймĕн, райра.

Йанк та йанк тутараç хырăмсем. Литр хыççăн литр çăтаççĕ вĕсем.

Хĕрелеç питсем. Хĕрес оркăнсем.

— Епĕ кам?—сухăрать Петровĕ.

— О, есĕ—Çĕрпў районĕнчи „Радио" патши.

— Тĕрĕс. Еп патша. „Радио" колхозĕн патши... Пурне те пултаракан çын... Чухăн колхозниксенчен кулса сире кулаксене, клас тăшманĕсене, ĕçкунĕсем ытларах лартатăп. Вот епĕ кам...

Колхоз тыррине сирĕнпе салатнă. Патшалăх заданийĕсене йалан хирĕç пулнă. Çапла мари? Еп сире пулăшмани? Ну, пулăшман штолĕ?—хĕрсе кайнипе Трофимăв йатлă кашкăрне силлесе çухăрчĕ Петров.

— Çапла.. Çапла, Петров,—пĕтĕм вăйхалпах йăпатать Петрова. Йăпата-йăпатах кроват çине вырттарать. Ачашла-ачашлах çывăрттараççĕ.

— Апуç,апуç!—теççĕ пурте харăс. Хăшĕ куçпуçпе савса ачашлаççĕ. Хăшĕ çурăмран лăпкаççĕ. Хăшĕ тата чĕлхисене пĕрер метр тăсса йанă та пичĕсене, ура тупанĕсене каçса кайсах çулаççĕ.

— Ех, райçке кунта, рай! Кулаксем йепле аван вĕсем. Сывă пултăр кулачĕствă. Çапла мăкăртатса выртнă çĕртех ыйăхăн курăни курăнми аллисем унăн чĕлхине çыхса лартаççĕ. Вăл алли урипех ыйăх тинĕсне путать. Сăмси анчах хутран ситрен кулакла кĕвĕсем каласах шăхăра-шăхăра илет.

Анчах инкек. Тасату силлемеле Петрова. Пĕтет Петровăн райĕ. Ех, ку тасату...

**Вениамин Туртуш.**

# Пахча çимĕç хуйхи.

Пахча-çимĕç валли Шупашкарта çителĕклĕ складсем хатĕрлемен.




**Паранкă** (Шупашкар хулин планĕ çине пăхса):— Ку план çинче мана кирлĕ складсем курăнсах каймаççĕ ĕнтĕ. Апла... ăçта хурĕç-ха мана. Неушлĕ рабочисен хырăмне кĕмесĕрех çĕрсе каймала пулать?!

# Пěри, те йулман.

Ĕçĕ çавăнтан пуçланчĕ.

„Хĕвел“ колхозра авăн çапса пĕтерсе патшалăха тÿлемелине тÿлесе татрĕç те, çак çул пуçланнăранпа ĕçлесе тунă дохода ĕçкунĕсем тăрăх валеçрĕç. Кĕнеке çине миçе ĕçкунĕ çырнă, пурне те çавсем тăрăх илетĕн. Анчах çапла туни хăшнепĕрне уйăр кун йур çунă хăйех кўрентерчĕ. Ара, кўренмеллех ĕнтĕ: çынсем тыра лавĕ-лавĕпе, ашкакайĕсене темиçешер пăтăн йăтнă вăхăтра, вĕсене хул хушшипе хĕстерсе каймалăх тивни темрен ытла кўрентерчĕ.

Вĕсем тепĕр кун пĕр-икшерĕн правлени патне пухăнма пуçларĕç. Лайăх ĕçленĕшĕн кайа йулса пыракан „Йăмралăх“ колхоза куçарнă колхоз пуçлăхĕ вырăнĕнче иккĕмĕш ерне ĕçлекен Салтак Ваççи бригадăсене кайма тесе крыҫца умне тухсан вĕсем пĕр-пĕрне пўлсе кăшкăрма тапратрĕç.

Чăпар Илле сăхман кĕсйинчен шурă тутăр кăларса сăмсине шăлчĕ те, колхоз пуçлăхĕ йеннеле çаврăнчĕ.

— А, есир мана, Ваççили Петрович, пĕр сăлтавсăрах обижат тăватăр. Мĕн пурĕ 34 кĕрепенке çăнăх панă. Мăшкăл ку, хаклă иптешĕм.

Хăй ĕнер колхоз кĕлетĕнче çăнăх илсен ытла сахал илнипе çынсем куласран картасем хыçĕнчи çырма тăрăх пынă чух лачакана кĕрсе ўкнине, тата çырма хĕрĕнче выҫакан вĕт-шакăр ача-пăчасем курса „тытăр, тытăр“ тесе ĕрлешсе чупнине астуса пушшех вĕриленсе кайрĕ.

Суран пур ман. Халĕ вăл çийелтен ўт илнипе суран пек те мар. Анчах ĕçлеме кайма тесе тумтир тăхăнма пуçласанах чĕре тĕлĕнчен хĕртнĕ пăшатанпа чикнĕ пек чикет. Суран çапла ыратнине кура ĕçлеме тухма никак та майсем пулмарĕç...

— Епĕ,—пўлчĕ Иллине Храмăв,—колхозсем пуçланнăранпах сивĕ тытнипе аптратăп. Чирĕ вăл ак мĕнтен пулса. 1918-мĕш çулта хамăр партизансен отречĕпе шурă çăхансене йĕрлесе çўреттĕмĕр. Вăт çавăнтанпах çав сивĕ тытнипе аптратăп та. Бригадир ĕçлеме кайма пырса чĕнсенех çил-тăман йăвăр курăка силенĕ хăйех силеме тапратать. Тата леш...

— И-и-и ачасем!—хутшăнчĕ калаçăва мăнтăр питçăмартине хуйхăракан çын пек чышкипе тĕрĕтерсе тăракан Татук инке,—мĕн калаçмали пур.. Ак сăмахран, епĕ ĕçлеме пултарайманнине такам та пĕлет пуҫ тетĕп. Пĕтĕм шăм-шак ырататĕ. Пуçра аслати аватнă пек темĕскер кĕрлет. Айăк пĕрчисем йĕппе чикнĕ пек чикеççĕ. Вырсарникунсенче çеç пăртак самайланса çўреп. Çавăнпа мана тухтăр та ĕçлеме хушмарĕ. Сĕт-çу, аш-какайсем çийес пулать, атту тепĕр тепĕркулес текенни йерет, тет. Есир аш-какай мар, çăнăхне те 19 кĕрепенке çеç панă...

Çапла харкашса тăнипе, çынсем хыçне Петруха мучи пырса тăнине пĕри те сисмен. Тўрех калас пулать, Петрухха мучи пирĕн колхозри чи хастар ударниксенчен пĕри шутланать. Вăл хăй вата пулин те пикенсе ĕçлеме тытăнсан йаш çамрăк-кĕрĕмсенчен пĕртте йулмасть.

— Çак шăпчăксен йурриле ан итлĕр,—терĕ вăл председател умне утса пырса.—Епĕ вата пулин те шăрăх вăхăтра вĕсем пек сулхăнта выртмарăм. Сулхăнтан тухман пулсан манăн та 80 ĕçкунне çитместчĕ. Чăпар Иллен нимĕнле суранĕ те çук ун. Вăл ĕçлеме ўркеннипе çеç сирĕн куçăр умне тĕтре сарать. Храмăв çинчен калас пулсан, вăл—лодăр, найан, суйеççĕ. Бригадир кашни кун виç-тăват ĕç патне чĕнсен те вăл хырăм ыратать, пуç ыратать, тесе суйса ĕçе тухмасчĕ. Татук инке çинчен каламастăп та. Вăл ĕç тумасăр сулхăнта выртса самăрланнипе аптрать. Колхоз ферминчи сыснасем ытла мăнтăрланса кайса ăшĕсене çу тулнипе сывлаймасăр, шартлама сивĕсенче пăр çине туха-туха выртнине хамăр та лайăх курнă. Ку та çавнашкалах пула пуçланă.

— Вĕсем...—терĕ Петрухха мучи „инвалидсем“ йеннеле çаврăнса.

Анчах çул çинчи çўп-çапа çил вĕçтерсе тасатса кайнă пек крыҫца умĕнчи пасăрхи „инвалидсенчен“ пĕри те йулман. Вăл Татук инке çырма хĕрĕнчи тайлăк мунчана вĕçтерсе кĕрсе кайнине, тата Храмăв хăйсен çумĕнчи хушлăхпа автомобил пек тусан кăларса чупнине çеç курса йулчĕ.

**Уйăр (Хв. Уй хир).**

---

# Сехре хăппи

Аслă-Нукашри (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) „Сталин“ колхозра кутаранччен те çуркуннехи ĕçсене колхозниксен шута илсе ĕç кĕнекисем çине çырманнисем пур.

Кашни 5 кунтан чупса кĕрет колхоз кĕнчелерне бригадир Роман Митрофанчă бригадăн ĕçкунĕсене ларттарма.

— А мĕншĕн автомат пекех чупать вăл?

— Унăн положенийĕ çавнашкал. Ĕçленисене, çĕр шутне учота илнисене веçех пуçра чиксе çўрет. Пуçĕнче ĕçкунĕсене лартмалли уйрăм (отделени), çĕре шута илмели тепре, тет. Вăт башка тăк башка! Башка малтанах ĕçкунĕсене веçех маннă пулать.

Вăхăт çитсен вара питĕ хытă чупса килнĕ май башка, метеорит сывлăшра вĕçсе пынă чух хĕрсе çуннă пек, хĕрсе кайса мĕн пур сведĕнисене аса илет. Урăх ним те çук унта.

— Илсе йул ĕçкунĕсене,—çухăрса йачĕ хайхискер счетовод патне пырса.

— Ăçта шуйтана çырас тетĕн вĕсене. Каларăм сана иртнинчех, уйăхран тин кил тесе,—тата хытă кăшкăрчĕ счетовод.

— Вырăн çитет,—лăплантарчĕ бригадир.

— Иртнинче ăçта çырса панăччĕ-ха епĕ сана?

— Çакăнта.

— Ну тавай, çавăр еппин çурăмна.

Анчах çурăм çине çырма май пулмарĕ.

— Мĕн тăвас? Ăçта çырас?

Романăн башка теме те йарса илĕ.

— А, хĕрлĕпе хура хăма çине çырас. Вĕсемпе çителĕклĕ усă курмала тесе конкретлă каласа хăварчĕ вĕт ударниксен сйеçĕ.

Рас, рас, ĕçкунĕсене хăма çине.

Пĕтрĕ пуç. Хура хăма 100%-епех..

Романăн башки те, кĕлетки те шап тулли чыххăрсемпе. Аран-аран уткаласа çўрет. Вăт сехре хăппи. Райсĕрпайĕ, сирĕншĕн тата мĕнле?

**Еркес.**

# Иетĕрне районĕнчи Сарйел ачисем



— Вĕренме пуҫтарăнтăмăр. Шкул ҫуртне пайан туса пĕтересси паллă мар.

# Йӑпӑлти çын ӳкӗнни

Пайан манран мӑшкӑларӗç.

Хайар, мӑнкӑмӑллӑ пите тирекен пӗр сӑмах тӑрӑнтарчӗç:—намӑссӑр, йӑпӑлти! терӗç.

Мӑшкӑлакан çынна епӗ пӗрре çапас терӗм те, авӑк шухӑш куçа чалӑртса хучӗ, çӗкленнӗ аллӑма чарса тартрӗ.

Тен чӑнах та пулӗ унӑн сӑмахӗ. Хамӑр çитменлӗхсене епӗр курмастпӑр, вӗсем айакран пӑхсан анчах аван курӑнаççӗ.

Хама кӳрентерекенрен айаккарах тӑрӑнтӑм та хам пурнӑçра мӗн пулнине аса илме пуçларӑм. Хӑçан йӑпӑлти пултӑмши, хама хам тытасчӗ, терӗм.

Хам çуралнӑ кунтан пуçласа аса илме тапратрӑм. Анне мана калаччӗ: епӗ ун ӑшӗнчен тухсанах ытти ачасем пек çӑвара карса çухӑрман, шӑпӑрт та шарламарӑм тетчӗ.

Манӑн йӑпӑлтатасси çак сехетренех пуçланмаст̆ши? Аннене çилентерес мар тесе, епӗ пӗртте шарламарӑм. Тен, анне кӑмӑлне çавӑрас тесе епӗ тата çӑварӑма чипер пуçтарса тытрӑм пулӗ?

Тен, пирӗн йӑпӑлти шухӑшӗ хамӑртан тухмаст̆ те пулӗ. Пулат̆ вӑхӑт, пирӗн туйӑм хамӑртан та килмест. Акӑ калас:—хама хирӗç пуçлӑх утса килнине курсан, ман пит-куççем хавасланса шыв çинчи çу тумламӗ сарӑлнӑ пек хӗпӗртесе сарӑлса выԓԓанаççӗ. Епӗ хам пит-куç выԓԓанине пӗрсе, пӑчӑртаса уссисем айне пытарасшӑн тутасене чӑмӑртатӑп. Чармалли çук. Ман питçӑмартисем выԓԓанма чарӑнмаççӗ.

Хам йӑпӑлти пӳлнишӗн епӗ айӑплӑ та мар. Ман йӑпӑлтату историлле пулса тӑнӑскер. Ман асаттесене патша атти килли 300 çул таптаса пурӑннӑ. Асаттесем сӑмаха та йӑпшӑнса, вӑрӑ пек лӑпчӑнса кайалла çавӑрӑна-çавӑрӑна пӑхса анчах каланӑ.

Çавӑн пек аслисем умӗнче тайӑлни, полици умӗнче чӗтрени, вайлисем умӗнче йӑпӑлтатни вӗсен туйӑмне лапчӑтса лартнӑ (Дарвин теори те çакнах çирӗплетет), кайран çак туйӑм çуралнӑ ачисем çине куçат̆, вӗсен чӗринче кашни çӗнӗ сыпӑкра çирӗпленсе ларат̆.

Тата, тепӗр тесен, хам йӑпӑлтатнинче енӗ пӗччен анчах айӑплӑ-ши вара?! Çук, епӗ пӗччен мар, пурте айӑплӑ.

„Етем“ тенӗ сӑмах—пӳтсӗр сӑмах.

Епӗ çын умӗнче кӑлтӑрмач пек çавӑрӑнса йӑпӑлтататӑп, çав сехетрех хам умра тӑракан çынна хытӑ асӑрхатӑп.

Епӗ çак çынна сӑмахӑн ырӑлатӑп,—лайӑх çын, тӑну-пуçу аван, есӗ ӑслӑ, тесе мухтатӑп. Унӑн тӑнӗ пуçӗнче, ӑсӗнче мухтамалли çуккине лайӑх пӗлетӗп, вӑл хӑй мухтамалли нимӗн те çук çинчех хӑйне мухтанине пӗлет; çавах мухтасан пӗт-пӗтӗмпех пулса кайат̆. Хӑй сӗвенмелли пукан çине ларнӑ, хӗпӗртенипе мӑшлатса анчах ларат̆. Лайӑх, ырӑ çын тени ун чунне килӗшет.

Етем тени (хӑшпӗри) çаккӑн пек ӗнтӗ.

Мана укçа кирлӗ чух епӗ хам ӗçленӗ çӗре кайса аслӑ бухалтӗр патне пыратӑп та, аван пероскӑ сӗнетӗп, хам йӑпанса ыйтатӑп: Иван Иванчӑ, ачусем лайӑх çӳреççи-ха?

Ах, ачасем тесен, ашшӗ пекки такам та çемçелет. Санӑн ачу ытти ачасем пек мар, тесе каласан, ачасен ашшӗ аванс укçи мар, хӑй чунне те кӑларса парӗ.

Иван Иванч йӑл кулат̆.

— Чупаççӗ-ха, йулташ, аван чупаççӗ. Пӗчӗк Кат̆окӑн икӗ шӑл шӑтса тухнӑ, ак çакӑн-ӑн пысӑккӗш шӑлӗсем!

Иван Иванчӑ кӑранташ кӑтартат̆.

Епӗ тата мухтатӑп:

— Чӑнах та сирӗн ачасем, пит паллӑ ачасем. Кама хунӑ-ши çав ачасем?!

Çавӑнта епӗ ун ачисем тунӑ пӗр-пӗр йапала ас илетӗп, йе вӗсем тӗлсӗр каланӑ кӗнеке çинчи сӑмаха астутаратӑп.

Иван Иванчӑн сӑнӗ хӗпӗртенипе çавракаланса кайат̆. Унӑн çӑварӗ хӑлхи патне çитех чӑсӑлса кайат̆; хутсем хумалли папкӑ лапах; çак папкӑн кантрасем кӑкарса çыхса лартасси кӑна пулат̆.

Иван Иванчӑ патӗнчен киле тухса утиччен аванс укçи ман кӑсйене шӑнкӑрт кӗрсе выртни паллӑ ӗнтӗ.

Хӑш чухне ман ӑшӑмра чӑн.чӑн етем вӑранса паларат̆, вара епӗ мӑнкӑмӑлланатӑп. Çав сехетре ман ума заведуйушчи йытти чупса пытӑр, ман пит-куç савӑнса йӑл кулат̆.

Калама пӗлместӗп,—тен ытти хӑй чӑнах килӗшӳлли, йе вӑл мана анчах аван пек курӑнат̆-и. Тем тесен ман заведуйушчин йытти усал пулас çук. Çак шухӑша хам пуçра сиссе епӗ лапах тытрӑм та хама йӑпӑлти тесе хӑртса мӑшкӑлакан çынна каçартӑм. Ун сӑмахӗ—чӑн. Епӗ йӑпӑлти çын. Хаԓхи хӑй апла пулмӗ, мана атте вӗрентетчӗ: Есӗ çынсене хирӗç пулсан пӗрмайах пуçа тайса ирт, уншӑн пуç татӑлса ӳкес çук. Çынни вӑл тепӗр сехетре кирлӗ пулма пултарат̆, тетчӗ. Çавӑнпа та йӑпӑлти çын пулнӑ ӗнтӗ.

**Ваç. Паруссӑв.**

## Чӑхӑ тата укçа.

Пусма ларнӑ чӑх кирек хӑçан та хӑй айӗнчи çӑмартасем ӑшӗнчен чӗпӗ тухасса кӗтсе ларса тинкине кӑларат̆, теççӗ. Аслӑ-Арапуçӗнчи (А. Патӑрйел районӗ) йалпора ӗçлекенсем чӑхран нимпе те начар мар. Вӗсем те пукан пичӗпе хӑйсен лармалли пайӗ хушшинчен пай укçи тухасса кӗтсех лармалли пайӗсене хуртлантарса йарас вӗçне çитернӗ. Усси пулнӑ пулсан татах-чӗ хӑт̆... анчах авӑ августӑн 20-мӗш тӗлне те 2500 тенкӗрен 683 тенки аран-аран шӑтса тухнӑ. Те малашне те çаплах ларас теççӗ вӗсем. Çапла ларсан, тӑхта-ха еп вӗсене,—купарчисем айне „Капкӑн“ лартса хурам.

## Тарнӑ та çук.

Кӗçӗн Арапуç (А. Патӑрйел) шкулӗнчен шкул алӑкӗ тухса тарнӑ. Пӗтӗм йалсовет составӗпе хӑваласа та тытайман тет ӑна. Ӗçсем чӑнахах йапӑх. Вӗренӳ çулӗ пуçланнӑ—алӑк çук.

„Капкӑн“ ишчейкине йарса памах лекет пулӗ.

# Хитре Йеҫук

Тăвай йалĕн (Канаш районĕ) „Хавас“ колхоз енĕсем каланă тăрăх, ăна колхоз председателĕ—кифăрăв, тата правлени членĕсем йуратнипе ла „Иелена Прекраснайа“ тесе йат хунă. Хитре ҫук тени пулаҭ ĕнтĕ вăл. Хитрине чăнахах хитпулĕ те-ха вăл, анчах ĕҫлес тĕлĕшпе хитрех р вара.

— Йеҫук, айта ҫум ҫумлама?—чĕнеҫҫĕ ăна колз членĕсем.

— Вăхăт ҫук манăн,—тет вăл вĕсене хирĕҫ.

Ҫапах та ĕҫ кунĕсем ыттисен пекех „тулса“ раҫҫĕ, мĕншĕн тесессĕн ăна ĕҫе тухмасăрах нисем, ăратнисем ĕҫ кунĕсем лартса пынă. Вăл те мар, ăна час-часах премисем панă—хитрешĕн пулмала.

Ĕлĕк йал-йышсем ăна—Йаккăвлĕвă Йеленă, тесе нĕ. Ҫапла унăн хут ҫинчи йачĕ. Йеҫук 18 ҫул ртнă ҫĕре, вăл йалта „первăй сорт“ хĕр шутнă. Ну, вара, йалти вак-тĕвек служашчисем шни хăй йенне ҫавăрасшăн уншăн конкуренцине хнă. Вăрăм Йакăпа (Йеҫук ашшĕне ҫапла чĕҫҫĕ) йурас шутпа, вĕсем тĕлĕнмеле ĕҫкĕ-ҫик ласа йанă.

Йакăп сăмаха питĕ ăста, ун патне „каччăсем“ ех илсе пырсассăн вăл питĕ савăнаҭ вара.

— Киҫах, кил! Лар сĕтел хушшине,—тет вăл лек пек сухалне сăтăркаласа.

Ĕҫеҫҫĕ, ташлаҫҫĕ, хăш чухне пĕр-пĕрне айăк иммисене суйлаҫҫĕ.

— Ак сана, ак сана!—шанлаттараҭ Йăс Мирунĕ ван Наумчăна.

Пўртре ҫил-тăвăл пек ҫаврăнаҫҫĕ.

Ҫакнашкал ĕҫкĕре вара, пĕринче 18 ҫулхи хĕре кĕмĕш хут „тĕне кўртсе“ „Йелена Прекраснайа“ се йат хунă.

Савăнса ҫеҫ пурăннă Йеҫук, анчах ытти членĕне ку ирсĕрлĕхсем питех савăнтарман.

Шупашкартан прокурор пырса колхоз ĕҫне тĕленĕ хыҫҫăн, вăл ҫеҫ мар, унта питĕ нумай тменлĕхсем палăрнă, ҫаванпа Никифăрăва, шлеле ĕҫленĕшĕн 3 ҫуллăха йусанмали ҫурта хупала турĕҫ. Ыттисене те тивĕҫлипе айăпланă.

Малашне ĕнтĕ „Хитре Йеҫука“ ĕҫлемесĕрех ĕҫ нĕсем тўлесе премисем парса тăракансем пулас к, унăн чăнахах тивĕҫлĕхпе ырă йат илтес тессĕн, пикенсе, ҫаннине тавăрса ĕҫлес пулаҭ, арлă ĕҫлесе хăйне палăртсассăн епĕр вара ăна нех тĕрĕссипе „Йелена Прекраснайа“ тейĕпĕр, ччен... Кахал Йеҫук унăн чăн йачĕ.

**А. Каврилăв—Аҫик.**

## Кăтартулă шкулта.

Йункăри (Тутаркас районĕ) кăтартулă шкулта кăтартулă парттăсем пурĕш 28 пур. Ку ҫирĕм иккăрĕш ĕнтĕ чылайах кивелсе кайнăскерсем пуин те, „кăтартулă“ йата илтме тивĕҫлех ĕнтĕ, ĕншĕн есен вĕсем куҫа лайăх курăнса лараҫҫĕ. Тата ав шкултах 27 ача ваҫҫи парттăсем „пур“, анчах ĕсене епĕр нийепле те „кăтартулă“ теме пултаайместпăр, мĕншĕн тесен вĕсене куҫпа курма айсем ҫук.

— Ара вĕсене, ҫĕнĕ вĕренў ҫулĕ пуҫланнă пулин е, тума тытăнман-ха.

# Пулăшрĕ

— Есĕ, тăхлачă, епĕ каланă пекех ту еппин,—тенĕ йалти Илле Иванчă Йакаткин кулак хăйĕн умĕнче ларакан ыйткалакана.—Пыратăн та унта, калатăн: ҫапла-ҫапла, тетĕн. Мĕн есĕр ухмахланса колхоза кĕме хатĕрленетĕр. Ну, кайса куртăм епĕ... пĕр-пĕр инҫетри йал йатне калас пулаҭ ĕнтĕ кунта. Ҫав йалта те, колхозран пурте тухса пĕтнĕ. Выҫă лараҫҫĕ. Тыррисене пĕтĕмпех патшалăх шăлса кайнă. Ҫимелĕх пĕр пĕрчĕ те хăварман. Выҫăпа хăшĕсем шыҫса кайнă. Сăхсăхса тупа тусах ĕнентер ес. Сана ĕненĕҫ вĕсем, есĕ ватă...

— Мĕн?—тесе вуннăмĕш хут ыйтнă карчăк, хăлхи айăплăрах ĕҫленĕ пирки унтан.

— Суй, тетĕп, лайăххрах. Ан кĕрĕр колхоза. Унта выҫă лараҫҫĕ, те.

Илле Иванчă сухалĕсене сăтăркаласа чĕнмесĕр ларкаларĕ темиҫе минут хушши. Унтан кăсйинчен хура укҫа хутаҫҫи туртса кăларса, карчăка укҫа тыттарчĕ.

— Акă сана. Суйса ĕнентерсен татах пĕр тенкĕ тыттарăп.

— Йурĕ, йурĕ,—терĕ карчăк.—Тăрăшăп. Ҫаплах калăп: ан хăрăр, тейĕп.

* * *

Тепĕр сехетрен Илле Иванчă йалсовет председателĕ пўртне васкамасăрах кĕрсе кайаҭ. Унта кăвак тĕтĕм пĕлĕчĕ ăшĕнче вунă хресчен ларнă каласса. Илле Иванчă йĕри таврала пăхса илчĕ те, хĕпĕртесех карĕ. Хайхи карчăк лараҭ пўртĕн пĕр кĕтессинче. Карчăк каласаҭ:

— Ырă ҫынсенчен илтрĕм епĕ... колхоза пирĕн те кĕмеле. Кĕрĕр, кĕрĕр. Епĕ иртнĕ кунсенче Ҫутҫўл йаленче пултăм. Ĕлĕк, теҫҫĕ, ҫиме ҫитмесчĕ, халĕ колхоза кĕтĕмĕр те, ытлашшипех тырă тума пуҫларăмăр.

— Мĕн ес, шуйттан карчăкĕ, лапăртатан. Ухмаха йеретĕн-и мĕн,—тесе туртаҭ хайхи Илле унăн ҫаннинчен.

— Мĕн?—терĕ хирĕҫ карчăк.—Ара, есĕ, ачам, ҫаплах каларăнҫке-ха: кĕрĕр колхоза, теме хушрăн. Укҫа патăн мана ҫавна каласа ҫўренĕшĕн пултăр тесе. Кайран татах пама пултăн ху...

Илле Иванчă пĕре кăвакарса карĕ, тепре хĕрелсе карĕ. Колхозниксем, мих ăшĕнчен тимĕр пăрса сапса йанă пек, пит ҫăран ахăлтатса йачĕҫ.

— Ох-хо-хо-хо. Ай-йай, маттур! Маттур, тăхлачă! Пултаратăн.

— Вĕрентсе йанă та, ĕҫĕ тухайман.

Илле Иванчă вăр-вар пўртрен тарса тухса урамала кайса ҫухалчĕ. Колхозниксем кулни тата вăйлăраххăн пўрте йанратса йачĕ.

**Михаил Кр—в.**

---

**„Капкăн“ ҫитес номĕрĕ ыран-семех тухаҭ.**

**Малали уйăхсемшĕн ҫырăнса илĕр!**

---

Митта Петĕрĕ.

# Шухăшлакан

I.

Пĕлекен çынсем калана тăрăх кирек мĕнле йăшăлтатакан йапалан та чăн малтан пуçĕ шухăшлат. Хăшĕсем хырăм та шухăшлат теççĕ Ну çапахта ăна ĕненмесг халĕхи халăх, ĕненме те кирлĕ мар.

Акă илĕпĕр пĕр примершăн—качака. Вăл сухаллă, майракаллă. Вĕт çакă качака та хăйне манир шухăшлама пултаракан пуçĕ пулмасан, тăвата ури çинче йатăнса çӳрекен йакăс*) хырăмĕ пирки пахчари купăстасене никамран ыйтмасăрах кĕрсе çисе хуралçăсене йатлаçтармĕччĕ. Мĕн чухлĕ кăна усал сăмахсем илтмест пулĕ вăл пĕр хырăмĕшĕн анчах? Апла пулин те, сысна пек „ахлатса" вăл нихăçан та хуйхăрмасть. Сыснасем вăйлă хуйхăраççĕ. Пуринчен ытла, пахчасенчи çĕрулмисем пиççе çитнĕ вăхăтра вĕсен усăнчăк пуçĕсем çине йăвăр шухăшсен çĕклемĕ килсе капланать. —„Мĕнле кăна кайас та, мĕнле кăна хуçана улма кăларма пулăшас" тесе çĕркаçах антăравлăн ĕнĕрлесе сывăраççĕ вара вĕсем:—Йе, алтăвипе хирĕç тухса илессĕн? Нăри-и-и-ик!!!

Анчах, çакăн пек шухăшпа йантă мула хапсăнса пурăнакан сыснасем хал питĕ сахал. Йединоличнĕксен картишĕсенче çеç кăшт-кашт йулкаланă вĕсем... Ак хамăр йалтах: чăн лайăх, чăн илемлĕ те чăн ăслă (хуçисем пек) сыснасем пурте фермăра йăраланса çӳреççĕ. Ир пулсанах вĕсене Ваҫкка ударник, уйри йешĕл, çемçе çерем çине прогулкăна илсе тухса каркалантарса анаслаттарать. Шăрăхланма пуçласан кӳлĕ хĕррине анса шывпала çăвăнаççĕ... Çанçурăмĕсене сулхăмлантарса уçăлтараççĕ. Кăмăллă пурăнма та каçпа витере. Вите аслă, çутă, таса... Кашнайĕшне тенĕ пекех—уйрăм кайуттă. Вара мĕншĕн-ха хуйхăрас?.. Вăхăтран вăхăта виçелĕ парса пыракан тĕрлĕ тĕслĕ апат-çимĕççемпе карланкă таранах тăраннă хыççăн, пахчари тăварсăр, пиçмен çĕрулмисем тĕлĕкре те куранса тĕлленмеççĕ. Шухăшсем ĕнтĕ пысăк:—Тăтăшрах çăвăрласчĕ... Йышлăрах та шултрарах тăвасчĕ. Таса ăрăва çухатса, хамăра хисеплĕн пăхакан хуçасен кăмăлĕсене тавăрас марчĕ... Аçисем те шултра йăхранчĕ-ха та...

Пуç шухăшлат. Сыснан та, качакан та хырăмĕсем мар,—пуçĕсемех шухăшланине акă йепле лайăххăнах куртăмăр. Çавсен йеверлех шухăшламасти Сăпанин тантăшĕ Кавăрлен пуçĕ те?—тейĕн есĕ, вулаканăм. Апла пулсассăн, ун çинчен те кăштах калаçăпăр.

Айлăмлă тип çырманăн тĕве купарчи манирлĕ мăкăрăлса тăракан çыранĕ хĕрринче пĕр ватă йăмра лапсăртатса ларнă. Ку йăмрана такçан ĕлĕк вилсе кайнă Хуралкка старик, çурхи шыв çырана ишсе хăйĕн пахчине çĕмĕрсе кĕресрен лартса хăварнă, теççĕ. Çырма йал варрипе йухса тухать. Унăн йачĕ „типĕ" пулсан та шывĕ мĕнле шăрăхра та типĕнмест. Пăртак та пулин тĕпĕнче шăнкăртатса выртать. Икĕ çыранĕ, йешĕл çеремлĕ пуставпа витĕннĕ çыранĕсем Сăпанин уйавсенче тăхăнакан кĕпи аркийĕпе йапшаррăн йалкăшакан куçĕсем йеверлех Кавăрлен кăмăлне илĕртеççĕ...

...Пĕр каçхине çакă йăмра айĕнче мĕшĕлтетсе калаçса ларакан икĕ мĕлке—Сăпанипе Кавăрле мĕлкисем пулнă..

— Çак вăхăтсем асна килĕç-ха. Мана мансан та, çак çырманăн çыранĕсем шухăшăнта йешĕрсе манăнми хурлантарĕç.

— Вара мĕн тăвас-ха... рас сул çитнĕ тĕк...

— Епĕ каланисене тусан ним те мар йулатăн.

— Каланисене...

Ответ парас тейекенĕн пуçне тантăшĕн сăмахĕсемлĕ шухăшсем килсе капланчĕç. Сывăхран та çы ăх тантăш. Пĕрин сăмахĕнчен пĕри нихăçан та кулман. Ну çапах пĕлмест вĕт. Кавăрлен ĕмĕтлĕ шухăшĕсене Сăпани сисеймерĕ. Ашшĕн куçне ылмашăнтарма пулăшакан Камали усламçăн емелĕпе сиплĕхлеме хушнăчĕ вăл çĕркаç Кавăрлене:

— Пăс куçна. Авă манăн атте вăрса кайасран та хăтăлса йулнă. Кăрăмсине *) хамах та тупса пама пултарăп. Салтака кайасран йулакан çак çĕр çинче телейлĕ пулĕ...

— Унта кайсан епĕ халĕхинчен вунă хут ытла телейлĕ пулăп,—тесе ответлесшĕнчĕ Кавăрле. Çак сăмахĕсене вăл кĕçĕр те асне илчĕ. Çапах, çапах та темшĕн каламарĕ тăтăклă шухăшне. Каланă пулсассăн та ĕнтĕ Сăпанисĕр пуçне никамах та илтсе пĕлес çукчĕ. Çакă йăмра, çакă лапсăркка йăмра вăл ватăскер, илтнĕ пулсассăн та, калех калатăп:—никама та елеклесе паман пулĕччĕ.

II.

Йалканаш председателĕ Куçма сăмахĕсем хăлха айне йантăраса кĕреççĕ. Пуç йывăр. Вăйлă шухăшсемпе сулмаклăланса сывăракан пуçне Кавăрле, аран-аран çĕклесе тăратрĕ:

— Мĕнле вара есĕ ир çитнĕ йысна?..

— Вара, вара... Ирхи хăнана тутăрах тăвас тетĕпха,—тет Кавăрлен амăшĕ, савнă кĕрӳшне витрери хăйар хăймаллă сăраран ăсăннă чаплашкана кăмăллăн тыттарса.

— Есĕ тăрха, кил... Мухмăр пулха санăн та... Вара пĕртак ĕç тупса парăп...

— Ĕç...

Ĕç çинчен каласа ăнлантарчĕ Куçма. Çĕркаç пĕрле мехмĕрленнĕ мухмăра çĕнетсе „урăлтарнă" хыççăн Кавăрлен, укçа-тенкĕ пухас ĕçпе йалхушшине тухса каймала:

— Активлă ĕçлени кирлĕ. Кашни призывникĕн массă хушшинче примерлă пулас пулать... пуринчен ытла санăн,—тет Куçма:—Пĕлетниха есĕ, финанс фронтĕнчи прорывшăн мана йепле ăшăлантараççĕ. Ирĕксĕр ĕçме вĕренĕн. Ей, хуҫакам! Пĕлместĕнха есĕ... тыр-пул хатĕрлев планĕ те вĕт...

— Вара, кĕрĕвĕм... Мĕн пĕлетĕпха еп хĕрарăм, тет Кавăрлен амăшĕ.—Те илĕç ĕнтĕ пире колхозне кайала?..

— Илĕçке-ха, илĕ-ĕ-ĕç,—тет Куçма кĕрӳ.

— Те илĕç ĕнтĕ Кавăрлене салтака?..

— Илĕç... илĕçке-ха а-а-ха...

III.

...Пайанхи чухăнсен пухувĕ райкомолран килнĕ йултăшăн ăнлантаруллă сăмахне итлерĕ. Вăл хăйĕн

*) Йакăс—тутлăрах, çемçерех апатшăн кавĕлакан хырăм.

*) Кăрăмса—вулах йеверлех чĕйе те хайар вислорот.

# Çитес çул мĕн пулмала мар

Канаш станцийĕнче тыр амбарĕсем патĕнчен вакунсем патне пынă çĕрте шап-шур сĕлĕ çулĕ вырткă пулнă.

— Мĕнле кунта шап-шур çул выртать? Хуркайăк çулĕн сăнĕ ÿкмен пулĕ-ске кунта?
— Ха-ха-ха! Хуркайăк çулĕ мар вăл,—кăнтăрла тăкса пынă сĕлĕ çавăн пек шап-шур тăсăлса выртать, тепĕр майăн Калаҫан, йапăхсем туса хăварнă çул, теççĕ ăна.

сăмахĕнче: Йалканашĕн тыр-пул хатĕрлевĕпе укçа-теккĕ пухас ĕçри прорывсем камсенчен килсе пынине, йалти йачейкă, призывниксем хушшинче нимĕнле ăнлантарулă ĕç тумасăр клас сисĕмлĕхне сӳнтерсе лартнине, ӳсĕр „йыснасемпе" мухмăрлă „активиссем" çинчен те татăклăн каларĕ.

— Кавăрле „активлă" ĕçлеме пуçланă. Анчах, кам-ха вăл... Мĕнлескер?—тенĕ хыççăн итлесе ларакансенчен умлăн-хыçлăн Кавăрлен „активлăхне" ĕнентерекен сăмахсем ывăтма пуçларĕç.

— Вара, ман пата пырса кĕчĕ те...

— Колхоз пасарĕнче нумай тырă сутнă есĕр, мĕнма сайом илместĕр?—тет.

— Сăмаварна турки туса сутатпăр акă, терĕ те,—вăтăрăмĕш çулхи перегиб курнă-им есĕ кунта,—тесе кăларса йатăм тӳпелесе.

— Ун чухне хăйсене те раскулачĕт тунă-чĕ вĕт...

— Кĕрӳшĕ пуçлăх пулнипе...

— Нивушлĕ ăна та салтака илеççĕ... Иртнĕ кăç Сăпанисем патĕнче йĕрсех йурлат.

— Кайĕ те çав, старав вĕт...

— Кайичен амăшĕсене колхоза кĕртсе хăварасшăн тет-ха кайаллах.

...Пуху саланчĕ. Унăн татăклă решенийĕ: Мĕн пур хатĕрлев планĕсене халех тултарас ĕçе пĕтĕм ĕçмассине утарлăн хутшăнтарас. Хĕрлĕ çарăн хурçă ĕретне пĕр йурăхсĕр етеме те кĕрсе кайма ирĕк парас мар,—тенĕ сăмахсемпе çырăнса вĕçленчĕ.

IV.

Тийевлĕ тырă лавĕсем хĕвел анса ларсан та çаплипех урампа вĕçĕмсĕр тăсăлса иртнĕ. Вĕсене организацилекенĕ Куçма вырăнне çĕнĕрен суйланнă, иртнĕ кĕркунне Хĕрлĕ çартан килнĕ комсомолĕс Хĕветĕр, тата призывниксем пулнă.

---

Темĕскер çинчен шухăшласа сар Сăпани çумĕнче Кавăрле ларнă. Сăпанин „тутлă" сăмахĕсем те хавшаклăн пĕтĕрĕнсе тухаççĕ:—Пĕлетни-ха есĕ... Ĕнер колхоз утарĕнче хурт пăхнă. 38 пăт пыл илнĕ те, çавăнтах патшалăха леçсе панă...

— Парĕçин,—терĕ те Кавăрле пуçне пĕшкĕртсе пӳрнисемпе çереме чакалама пикĕнчĕ. Унăн куçĕ умне иртнĕ кунсен сăнĕсем йăраланса тухса тăчĕç.

...Ун чухне ытла аванчĕ çав. Колхоза та Куçма „йысна" пулăшнипе „пыл маçтăрĕсем" тесе кĕртнĕччĕ Кавăрлесемпе Сăпанисене. Вара „маçтăр" пулмасăр,—18 çул тытăнса пурăннăçке вĕсен ашшĕсен аллинче икçĕр пуçа йахăн вĕллеллĕ вăрманти утар. Утар çумĕнчех акса пурăнакан çĕр лаптăкĕ те 30 теçетинăна йахăн хисепленетчĕ.

...Вăхăтлăха пĕрне пĕри ним чĕнмесĕр ларчĕç. Ăçтанха тупăн сăмах. Кăрăмсаран та хайар инкек килсе çакланнă.

Акă ырансенчех хастарлă, таса чунлă тантăшсем, массă умĕнче ĕçри çĕнтерĕвсем çинчен рапăртланă хыççăн Хĕрлĕ çар ĕретне пысăк шанăçпала ăсанчĕç. Хăмаçĕ йалав вĕлкĕшрĕ вĕсем çинче. Ăсату маршĕ уççăн йантрарĕ. Кавăрле пек ирсĕр ĕмĕтлĕ кивĕ тымарсене Хĕрлĕ çар нимĕнле ултавлă сăлтапа та хăй ĕретне çывăхлантарманнине татăклăн кăтартрĕçĕ призывник-ударник тантăшсем.

## Платниккăн пуртти çук, тырă илекенĕн...

**Чăвашсойус çынни:**—Тырă илме пуçларă мăр. Складсем çук.

**Тепри:**—Тырри килсен склачĕ пулĕçке ва[л]

**Кулак:** — Хам патăма хурăр, хам па[т]-тăма.

---

## Клевĕрпе правлени

Анатри Шурçырмари (Çĕрпӳ р.) Йурккин кол-хозĕн вăрлăх тумашкăн хăварнă клевĕр вăрр[и] вырса пуçтарса кĕмен пирки, ларсан-ларсан:

— Ку тулса çитнĕ вăрра йатса ларса ватăлтăм!-тесе лаш! хуйхăрса йанă.

Çĕнĕрен калçча çуратса хăварас тесе, вăррин çĕр çине тăкнă.

Клевĕр вă ри мăшкăланине сиссе, Йурккин кол-хоз правленийĕ, вăрри тăкăнса пĕтсен, клевĕр хă-рăк тунине çулса тăкса:

— Парăп епĕ сана манран ыйтмасăрах вăрр[у]-сене тăкма! —тенĕ тарăхса.

Тарăхнипе çумăр айĕнчех çĕрсе выртма пăрахс[а] хăварнă.

Ерне иртнĕ. Пĕр вĕçĕмсĕр çăмăр çуса тăнă. Кай[а]-ран клевĕр туни каланă:

— Йулашкинчен çĕре çемĕçтерме тислĕк пулап!-тенĕ.

Правлени, тислĕкне курма кайса килетĕн пу[л]-çавăнта хăçан та пулсан, ху çывăрса тăрсан.

**М.**

---

Сдано в производство 11-IX-33 г.
Подписано к печати 16-X-33 г
Секретарь и выпускающий редактор Илларионов.

Ответлă редактăр
самеçтиттĕлĕ **И. Павлăв—Пинер.**

Ст. ф. б. 200×285. Об'ем 1 п. л.

Изд. газ. „Канаш

Уполн. Чувашлита № 1048 Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 840. Тираж 4000 эк.